**«EXCELSIOR – 2020»**

***ХАЛĂХ КУЛЬТУРИ (ФОЛЬКЛОРИСТИКĂПА ЭТНОГРАФИ) СЕКЦИЙĔ***

# *ЧĂВАШ ХАЛĂХĔН ЭТИКЕЧĔ*

**Иванова Виктория Владимировна, Çĕрпӳ районĕнчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан Чурачăкри вăтам шкул, 8– мĕш класс.**

**Наука енчен ертсе пыраканĕ : Андреева Мальвина Ивановна, чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекенĕ.**

# ĔÇĔН ТĔЛЛЕВĔ:

- Чăваш халăхĕ ĕмĕртенпех чăваш этикетне мĕнле тытса пынине тишкересси.
- Хальхи вăхăтра чăваш халăхĕ чăваш этикетне мĕнле тытса пынине тĕпчесси.
- Сăпайлăх сăмахĕсене ват çынсемпе тĕл пулса çырса илесси.
- Паллă çынсем сăпайлăх çинчен каланисенене пуçтарасси.
- Пирĕн шкул ачисем пĕр-пĕринпе ытларах мĕнле чĕлхепе сывлăх суннине тĕпчесси.

# *ТĔЛЛЕВЕ ПУРНĂÇЛАМАЛЛИ МЕЛСЕМ:*

- А. Фукс çырнă «Чăвашсем хушшинче, Хурăнлă çулпа» очеркпа ĕçлесси.
- Ватă çынсемпе, шкул ачисемпе тĕл пулса ыйту – хурав йĕркелесси;
- Чăваш этикечĕн тĕслĕхĕсемпе ĕçлесси.

***Тĕпчев объекчĕ:***

А. Фукс çырнă «Чăвашсем хушшинче, Хурăнлă çулпа» очерк. Чурачăк тата Тĕрер ялĕсенчи ватă çынсем. Чурачăкри вăтам шкулта вĕренекекнсем.

# *ĔÇĔН АКТУАЛЛĂХĔ:*

Кашни çыннăнах хăйне кирек ăçта та тытма пĕлмелле: çын çинче –и вăл е килте.  Хăйне тытма пĕлекен çынна культурăллă çын тетпĕр. Культурăллă çын пулас тесен мĕн тумалла-ха? Паллах, хамăра тытмалли йĕркесене, урăхла каласан, этикета пăхăнмалла тесе шутлатăп.

Тĕнчере пур халăхăн та кил-йышра, обществăра тыткаламалли йĕркесем пур. Чылай чухне вăл правилăсем пĕр пек мар. Тĕрлĕ халăхăн тĕрлĕ этикет. Апла пулин те пĕрешкеллисем те пур. Вĕсем, авалхи йĕркесем, халăха йывăрлăхсене  тӳссе ирттерме пулăшнă. Чăваш халăхĕн этикечĕн йĕркисем мĕнле пулнă-ши?

Çак ыйтăва татса парас тесе эпĕ тĕпчев ĕçĕ çырас терĕм.

# ТĔП ПАЙ.



Пурнăçри тĕрлĕ лару – тăрура харпăр хăйне гыткаламалли йĕркесем пулнă. Унсăр пуçне кашни ялăн хăйĕн йĕркисем пулма пултарнă. Тĕпчевçĕсенчен нумайăшĕ чăвашсем пĕр-пĕринпе хутшăннă чухне хăйсене сăпайлă тытнине палăртнă. Чăваш халăхне çутта кăларакан  И. Я. Яковлев  хăйĕн ентешĕсем çинчен çапла çырнă: «Вĕсем, чăвашсем, пĕр-пĕринпе хутшăннă чухне хăйсене сăпайлă тытаççĕ. Çав сăпайлăх ăçтан килнине Турă çеç пĕлет пулĕ. Чăвашсем кама та пулин кăнттам, тӳрккес, кӳрентерекен сăмахсем каламан, хăйсене кăмăллă тытма тăрăшнă. Пирĕн ялта пурăнакан каланă тăрăх, авалхи чăвашсен чи киревсĕр сăмахĕ те çапла пулнă имĕш: «Сан чусту йӳçсе кайса тăкăнтăр», - тенĕ.

Тепĕр çынна мĕнле те пулин асăрхаттару тунă чухне ăна кỷрентермесĕр, тĕксе каланипех çырлахнă. Тĕслĕхрен, ĕçленĕ чухне ачасенчен хăшĕ те пулин кахалланнине асăрхасан çитĕннисем çапла каланă: «Пирĕн ача çине çумăр ỷкрĕ пулмалла!» Кашни ачах «Кахал çын çине çумăр чи малтан ỹкет» текен ваттисен сăмахне пĕлет. Вара ачасем мĕне систернине тӳрех ăнланса илеççĕ.



Пирĕн халăхăн ĕлĕкхи йăлипе, çынсен пĕр-пĕрне улталама, кӳрентерме юраман. Вĕсем мĕнле те пулин парнешĕн е ырă тунăшăн ырăпах тавăрма тăрăшнă: лайăххрах парне панă е мĕн те пулин туса пулăшнă.

Çак шухăша çирĕплетме эпĕ А. Фукс çырнă «Чăвашсем хушшинче, Хурăнлă çулпа» очеркри йĕркесене илсе парсшăн: «Юратакан, килĕштерекен çынна тос е çывăх çын теççĕ. Çак сăмах – çынна телей кӳрекен сăмах. Вăл хур тăвасран сыхлать. Туссем  пĕр-пĕрне парнесем параççĕ, пĕри çăвăр хурт парнелет пулсан, тепри ăна, сăмахран, атă, çĕлĕк парнелет».



**А.А. Фукс** (1805-1853), вырăс поэтесси, этнографи очеркĕсен авторĕ

# *ТĔЛ ПУЛНĂ ТАТА УЙРĂЛНĂ ЧУХНЕ КАЛАКАН СĂМАХСЕМ*

Чăвашсен йăлипе, урамра кама та пулин тĕл пулсан сăмах чĕнмесĕр иртсе кайма юраман. Чарăнса тăрса çитĕннисемпе çеç мар, ачасемпе те, унтан ытларах ваттисемпе мĕн çинчен те пулсан калаçмалла, саламланине хирĕç хуравламалла пулнă. Питĕ кĕскен хуравланине килĕшӳллĕ мар тесе шутланă.

Сăмахран, çакăн пек саламланă: «Аван-и?», «Мĕнле пурăнатăн?», «Шĕкĕр турра! Лайăх пурăнатпăр», «Ачасем чиперех-и, эсĕ мĕнле?», «Çӳретĕп-ха хуллен, хăв мĕнле?»

Ĕлĕк чăвашсем алă парса саламласси пулман пулмалла. Каярахпа вара, çакă йăлана кĕрсен, арçынсем те, хĕр арăмсем те алă пама тытăннă.



Эпĕ хамăр шкулти ачасене мĕнле чĕлхепе сывлăх суннине тишкерес тĕллевпе анкетировани ирттертĕм. Ку ĕçе пурнăçлама 98 çын хутшăнчĕ. Пирĕн шкулти ачасем ытларах пĕр-пĕринпе вырăсла «Привет!» тата «Здравствуйте!» тесе саламлаççĕ иккен.






# Эпир, чăвашсем, «вырăсланма» пуçланнине пĕлтермест-ши ку? Çакă эпĕ тишкернĕ таблицăран аван курăнать.

| Çапла саламлаççĕ | 5 класс | 6 класс | 7 класс | 8 класс | 9 класс | Пурĕ пĕрле |
|---|---|---|---|---|---|---|
| Чăвашла: Ырă кун пултăр! | 1 | 2 | 2 | 2 | 2 | 9 |
| Вырăсла: Привет! | 10 | 12 | 14 | 12 | 17 | 65 |
| Вырăсла: Здравтсвуйте! | 9 | 11 | 9 | 7 | 15 | 51 |
| Акăлчанла: | 2 | 1 | 3 | 1 | 6 | 13 |
| Нимĕçле | - | - | - | - | 2 | 2 |
| Таджикла | - | - | - | 3 | - | 3 |
| Алă парса саламлани | 4 | 7 | 8 | 7 | 5 | 31 |
| Ытамласа илсе саламлани | 2 | 4 | 6 | 2 | 7 | 21 |
| Вырăсла: «Дай, пять!» | 5 | 5 | 4 | 3 | 1 | 18 |

Ачана хирĕç пулсан çитĕннĕ çын чарăнса тăрса унпа кăмăллă калаçнă; вăл ăçта кайни, ашшĕ-амăшĕ мĕнле пурăнни çинчен ыйтса пĕлнĕ, уйрăлнă чухне ырă çул суннă. Ача асли ыйтнипе хуравланă, тав тунă, çынна хирĕç пулсан чарăнса тăрса унпа кăмăллă калаçнă.

Чăвашсен йăлипе ачасене тата тантăшсене çеç ятран чĕннĕ. Ашшĕнчен аслăрах арçынна мучи, ватăрах хĕрарăма кинемей, хăйĕнчен аслăрах хĕрарăма аппа, инке, хăйĕнчен аслăрах арçынна пичче, тете тесе чĕннĕ. Эпир хальхи вăхăтра тăвансене çеç мучи, инке, кукка тесе чĕнетпĕр.



Пу̓рте кӗнӗ чухне ытти салам сӑмахӗсене те каланӑ. Сӑмахран, «Кӗме юрать-и?» е «Ман килес!» Вырӑсла «не знаю, можно ли было мне прийти, но я вот пришел» тесе куҫарма

пулать. Кил хуҫи ӑна хирӗҫ ҫапла каланӑ: «Килӗрех, килӗрех!». Пирӗн ялта ват ҫынсем пӗр-пӗр ҫын патне пырсан ҫӑкӑр-тӑвар ҫитермесӗр кӑларса ямаҫҫӗ.

Уйрӑлнӑ чухне ҫапла каланӑ: «Чипер!», «Сывӑ пулӑр!», «Шӗкӗр пулӑр!»

Тӗл пулнӑ чух саламламалли сӑмахсем лару-тӑрӑва кура тӗрлӗрен пулнӑ. Сӑмахран, тем ҫинчен хӗрсех канашлакан ҫынсен ушкӑнӗ патӗнчен иртнӗ чухне ҫапла каланӑ: «Канаш пӗрле пултӑр!». Ӑна вара ҫапла хуравланӑ: «Кил, пӗрле канашлар!»

Мунчана каякана «ӑшши тутлӑ пултӑр!» е «мунча кӗленче, милӗкӗ пурҫӑн, чулӗ мерчен, ӑшши шерпет пултӑр!» тесе ырӑ сунса янӑ. Мунчаран тухсан ытларах вырӑсла: «С легким паром!» - теҫҫӗ.

Инҫе ҫула, салтака каякана ҫапла каласа ӑсатнӑ: «Ҫулу такӑр пултӑр!» е «Кайма ҫулу ҫу пултӑр. Килме пыл пултӑр!», е «Ыр кӑмӑлпа кайса хавас кӑмӑлпа килмелле пултӑр!» тенӗ.



# ХĂНАРИ САЛАМ СĂМАХĔСЕМ

Чăвашсен йăлипе, хăнана икĕ хут чĕннĕ хыççăн каймалла пулнă. Хăнасем нихăçан та пушă алăпа пыман, сăра, икерчĕ, чăкăт тата ыттине илсе пынă. Чăваш ялĕсенче халĕ те пушă алăпа каймаççĕ. Пĕчĕк ачасем пур пулсан вĕсем валли кучченеç илме те манмаççĕ.

Çул çинче хăнана каякан çынсене тĕл пулсан вĕсене çапла каланă: «Хăна çулĕ такăр пултăр!» е «Çепĕççĕн калаçса ăшшăн юрламалла пултăр!», е «Ыр кăмăлпа кайса ыр кăмăлпа килĕр!»

Хуçисем хăнасене кашнинех хапха умне тухса кĕтсе илнĕ, лашисене тăварма пулăшнă, хăйсене пӳрте илсе кĕнĕ, сĕтел хушшине лартнă. Чăвашсен йăлипе, алăка хирĕç вырнаçнă малти сак çине хĕрарăмсем ларнă, айккинчи сак çине – арçынсем. Халь ку йăлана пăхăнмаççĕ. Арçынсем те, хĕрарăмсем те пĕрле лараççĕ. Кил хуçи вырăнĕ ĕлĕкхиллех, сĕтел пуçĕнче.

Хăнасене сăйланă чухне ватă çынсене уйрăмах хисепе хунă. Сăмахран, хуçисем ваттисене сăрапа хăналама пуçласан çамрăккисем пӳрт варрине тухса вĕсене пуç тайнă.



# ĔÇЛЕКЕНСЕНЕ САЛАМЛАНИ

Ĕçлекен çынсем патĕнчен иртсе кайнă чух вĕсене: «Вăй патăр!»-тенĕ.

Улăхра утă çулакансем патĕнчен иртнĕ чухне вĕсене çапла каласа саламланă: «Çарану илпеклĕ пултăр, утту тухăçлă пултăр!»

Уйра тырă акакана курсан ăна çакан пек ырă суннă: «Пĕр пĕрчĕрен – пин пĕрчĕ!»

Шыв ăсма каякан çынна хирĕç пулсан ăна çапла каланă: «Пушăпа кайса туллипе килмелле пултăр!». Тулли витресемпе килекене вара çакăн пек сăмахсемпе саламланă: «Шывĕ тутлă пултăр!»





# ПĔТĔМЛЕТӲ:

- Çапла вара, ĕлĕкхи çынсем çав тери сăпайлă пулни çинчен калама пултаратăп. Çамрăк ăрăвăн аслă çынсенчен вĕренмелли чылай.
- Килте, урамра, обществăлла вырăнсенче хамăра мĕнле тытмалли çинчен мĕн пĕчĕкрен вĕренсе пырсан культурăллă çын пулма пулĕ тесе шутлатăп.

# Тавтапуç!